* * *

...Чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ — юрласа ячĕ...
...Йĕрсе юрласа ярать...
Чăваш халăх юррисенчен.

Чăтаймарĕ те пуль, тӳсеймерĕ те пулĕ...
Пĕр янранă кулли, пĕр тумланă куççулĕ.

Тĕр тĕрленĕ — юрланă, арланă — юрланă,
Тĕртме ларнă — юрланă, пир çапнă — юрланă.

Ар ача акатуйăн, сĕренĕн сас тунă,
Ят тухни юрласан — çăлтăр витĕр çул курнă.

Сăпка сыпнă — юрланă чипер ача ашшĕ,
Сăпки сикнĕ — юрланă аннемĕр ачашшăн.

Юрăпа юхнă сим, кĕреке кĕр кĕрленĕ,
Юрăран çичĕ ют хăраса сехĕрленнĕ.

Çын çуралнă — юрланă, туй тунă — юрланă,
Юпине лартнă чух юрласах-çке хурланнă.

Кулянатăп пăртак: гонорарĕ-масарĕ
Пирĕн сăввăмăра катăкрах турĕ мар-и?

Халăха юрă пек витеймен-ха поэзи,
Ремесле пулса тăчĕ ку чух вăл, професси.

Укçаран хăтăлсан — чăн каланă çав, тейĕр! —
Пулĕç пирĕн чи хӳхĕм, паха сăвăсемĕр.

Манăн шухăшăмран пĕр-пĕр сăвăç, тен, кулĕ:
Чăтаймарăм та пуль, тӳсеймерĕм те пулĕ...



* * *

...Не стерпел, не выдержал — запел...
Запевает песню плача...
Из чувашских народных песен.

Да, видать, не стерпел, не сумел удержаться.
Смех и слезы в единой укладке хранятся.

Выщивала ль чувашка, ткала ль — напевала,
С песней пряжу пряла и холсты отбивала.

Агадуй * — запевали, бывало, и парни.
С песней рекрут
к дороге готовился дальней.

Пел счастливый отец, луб для люльки сшивая;
Колыхая ее, пела мать молодая.

С песней мед наливался, шумело застолье,
С грозной песней шагали на ратное поле.

Человек родился — песня к небу летела,
Человек умирал — песня с нами скорбела.

Мысль одна меня мучит: с построчною платой
Не спознались ли песня с большою утратой?

Ведь поэзия, став ремеслом понемногу,
В каждый дом не нашла еще нынче дорогу.

Как покончим с деньгами — меня помяните! —
Стих заблещет у нас, словно солнце в зените.

Вот предлог стихотворцам иным посмеяться.
Что ж, видать, не стерпел я,
не смог удержаться.

---

* Агадуй — праздник.